Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

47 (7472) № ✻ Юн кун, 2007 ҫулхи июнĕн (ҫĕртме) 6-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Июнĕн 8-мĕшĕ – Социаллă сфера ĕҫченĕсен кунĕ

### СОЦИАЛЛĂ СФЕРĂН ХИСЕПЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ!

Сире ҫывхарса килекен професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Сирĕн ĕҫ яваплă та пархатарлă. Хăвăр ĕҫĕр халăхшăн пулнине пĕр самантлăха та манмастăр. Куллен вуншар ыйту татса панă май эсир кашни ҫыннăн чун-чĕри патне уйрăм ҫул-йĕр тупатăр, инвалидсемпе ветерансемшĕн, нумай ачаллă ҫемьесемпе пулăшусăр юлнисемшĕн шанчăкпа тĕрек пулса тăратăр. Вĕсене пулăшас тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Мĕн чухлĕ чăтăмлăх, чун ăшши, ăшпиллĕхпе ăнланулăх кирлĕ. Тавах сире ҫакăншăн. Малашне те пĕрре те ан иксĕлччĕр ҫак ырă енсем сирĕнте.

Сире пурне те ҫирĕп сывлăх, ҫăмăл мар ĕҫĕрте иксĕлми вăй-хал, вĕҫĕ-хĕррисĕр ырă кăмăл, телей, вăрăм кун-ҫул сунатăп.

**Район пуҫлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**



***Татьяна Леонидовна Кириллова тата Юлия Парфеньевна Пугачева ЧР Сывлăха сыхлас ĕҫ, социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕнче вăй хураҫҫĕ. Пĕрремĕш ҫул мар ĕнтĕ. Юлия Парфеньевна кунта 1994 ҫултанпа, Татьяна Леонидовна вара Чăваш Республикин Президенчĕн стипендиачĕ те пулнă. Вĕсем – ватă ҫынсене тата инвалидсене килте социаллă пулăшу парас енĕпе ĕҫлекен уйрăмĕн заведующийĕсем. Пултаруллă ҫамрăксем шанса панă ĕҫе тӳрĕ кăмăлпа пурнăҫласа пыраҫҫĕ.***

***Сăн ӳкерчĕкре: Т.Л. Кириллова тата Ю.П. Пугачева.***

***В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

# Ырри ырăпах таврăнать ҫав

Хăв мĕнлерех ҫын, сан йĕри-таврари ҫынсем те ҫавнашкалах. Ҫак сăмахсен пĕлтерĕшĕ пурнăҫпа чăн килнине ҫак кунсенче Ҫĕньял Очăкассинче пурăнакан И.С. Максимовапа паллашни тепĕр хут ҫирĕплетсе пачĕ. Майăн 27-мĕшĕнче Ирина Степановна шăп 90 ҫул тултарчĕ. Ҫав ятпа ăна ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳҫи Н. П. Петрова пĕтĕм коллектив ячĕпе саламларĕ. Сумлă юбилейпа пĕрлех ҫывхарса килекен Социаллă сфера ĕҫченĕсен кунĕ ячĕпе те.

– Сирĕн 100 ҫулхи юбилейăра килмелле пултăр, сывлăхлă пулăр, – ҫак сăмахсемпе Нина Пантелеевна аслă ăрури ĕҫтешне утиял парнелерĕ.

– Малтан сывлăх чăхăмланине туйман, килте ларма пуҫласан ҫеҫ сисĕнет-ҫке вăл, – калаҫăва малалла тăсать кинемей. Хăть ăҫта та чунне парса ĕҫленĕскерĕн, хăй пек каласан, малтан чирлеме вăхăт та пулман. Ҫамрăк чух вĕренме хăтланнă. 4 ачаллă ҫемьере ӳснĕскер, ун чухнехи тантăшĕсем пекех ĕҫре пиҫĕхсе ӳснĕ мĕн пĕчĕкрен. Аслă пиччĕшне Михаила паян кун та тав тăвать вăл. Ара, шăпах вăл ҫине тăнипех-ҫке Ирина Сĕнтĕрвăрринчи землеустроительнăй техникума вĕренме каять.

– Ҫуранах ҫӳреттĕм, – аса илет паян Ирина Степановна.

Шупашкар районĕнчи Хăймалакасси хĕрĕ техникум хыҫҫăн Удмурт Республикинче ĕҫлет. Кунта вырăс каччипе тĕл пулнине, унпа пĕрлешнине паянхи пек лайăх астăвать 90 ҫулхи кинемей. Анчах юратнă мăшăрĕпе пĕрле ĕмĕр ирттерме шăпа пӳрмерĕ ҫав ăна. Хаяр вăрçă кассах татрĕ пĕтĕм ĕмĕте ҫеҫ мар, мăшăрĕн П.С. Максимовăн пурнăҫне те.

– Хыпарсăр ҫухалнă, – текен хаяр хыпар килсен, тĕнче пĕтсе килнĕнех туйăнчĕ. Пĕчĕк хĕрĕ юлчĕ асăнмалăх. Алăри пепкипе тăван яла таврăнать. Йывăр хуйхă ĕҫре ачасемпе пусăрăнатчĕ. Кунта ăна шкула математикăна вĕрентме чĕнеҫҫĕ. Педагог пулма ирĕк паракан диплом ҫуккине пула икĕ ҫултан унăн шкулти ĕҫе пăрахма тивет. Муркаш районĕ йĕркеленнĕ хыҫҫăн 1945 ҫулта вăл землеустроительте ĕҫлет. Тепĕр 3 ҫултан районти ял хуҫалăх уйрăмĕн бухгалтерĕ, унтан райĕҫтăвком секретарĕ. Ҫакă вăл Ирина Степановнан ĕҫ биографийĕ пирки пĕр илемлетмесĕр типĕ чĕлхепе калани.

Ҫав ҫулсенче вара унăн ҫамрăклăхĕ, унăн пурнăҫĕ. Хăйĕн ĕҫне чун-чĕререн парăннă вăхăт. Чун-чĕререн ҫав. Ĕҫ ҫине ҫиелтен пăхсан, ҫынсемпе кăнттам пулнă пулсан, 1949 ҫулта ăна районти хӳтлĕх пайне ертсе пыма шаннă пулĕччĕҫ-ши? Ҫук пуль. Ҫак ĕҫре 10 ҫул ĕҫленĕ хушăра кама кăна пулăшман пулĕ. Ҫынлăх – акă мĕн малта пулнă уншăн.

Паянхи пекех астăвать-ха вăл социаллă хӳтлĕх пайĕнче ĕҫлекенсен йышне чакарнă саманта. Кама урама кăларса яран? Кашнийĕнех ҫемье, ачасем.

– Почта начальникĕпе кайса калаҫрăм, унта вырнаҫтартăмăр вĕсене, – аса илет паян Ирина Степановна.

Пĕр ҫак тĕслĕх кăна ун чух Ирина Степановнана коллективра мĕнле хисепленине ҫирĕплетсе парать. Ăна паянхи ĕҫтешĕсем те манманнипе, сума сунипе вара унăн савăнăҫ куҫҫулĕ тухрĕ. Асилмелли, танлаштармалли тупăнсах тăчĕ. Калаҫу шыв юххи пек сыпăнса пычĕ.

Ялсенче ăнăҫсăр ҫемьесенче пулнă май паян та ҫакăн пек ӳкерчĕк тухса тăрать: йывăр пурнăҫпа пурăнакансем пур паян та. Анчах та кун йышшисем пирки аслă ăру ҫыннисем мăнтăрпа иртĕхнипе, теҫҫĕ. Ҫаплах пуль. Эрехе пула паян ачисене выҫă лартакансене мĕнле ăнланмалла?

– Тĕрĕс мар тăваҫҫĕ, – Ирина Степановнан сасси ҫирĕпленсе пычĕ. Нимĕнле вăрçăсăр, ашшĕ-амăшĕ чĕрĕ-сывă ҫĕртех ачасем нуша курса ӳсни кама тарăхтармĕ. Унтан вырăсла шатăртаттарма пуҫларĕ. Ара, сахал калаҫнă-и халăх хушшинче тĕрлĕ ыйтупа?

– Мĕнле кăна тăлăхсене пулăшман пулĕ. Вăрçă хыҫҫăн атте ăшшине, анне юратăвне туйăман мĕн чухлĕ ачана пулăшу паман пулĕ хӳтлĕх пайĕнче ĕҫленĕ май.

– Кама фуфайка, кама шăлавар ҫĕлесе параттăмăр артель урлă, – куҫĕсем шывланчĕҫ кинемейĕн. Хăйĕн хуйхипе пытанса пурăнма шутламан пĕрре те. 6-мĕш класра чух шăнса пăсăлнă хĕрĕ йывăр чирлеме пуҫларĕ.

(Вĕҫĕ 4-мĕш стр.).

## Республикăра

# Ял хуҫалăхне пулăшма – 10 миллиард тенкĕ

«Россельхозбанк» ертӳҫи Юрий Трушин пĕлтернĕ тăрăх, тепĕр ҫулталăк ҫура хушшинче банк Чăваш Ене ял хуҫалăх производствине аталантарма 10 миллиард тенкĕ уйăрасшăн. Ҫакă республика агрокомплексне аталантарассипе, уйрăм ҫынсен хуҫалăхĕсене пулăшас тĕллевпе ҫыхăннă. Ял тăрăхĕсене те пысăк пулăшу парасшăн. Кашни ял тăрăхĕнче банк представительствисене уҫма пăхнă. Вĕсенче банк ыйтăвĕсемпе ҫыхăннă пулăшу илме май килĕ.

# Визит ăнăҫлă иртнĕ тесе палăртнă

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров эрне пуҫламăшĕнче йăлана кĕнĕ йĕркепе Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳҫисемпе канашлу ирттернĕ.

"Россельхозбанк" АУО Правленийĕн председателĕн Юрий Трушинăн Чăваш Енре иртнĕ эрнери визитне респулика пуҫлăхĕ питĕ ăнăҫлă тесе палăртнă. Виҫĕ кунра патшалăх банкĕн ертӳҫи нумай объектра пулнă, хăйсен специалисчĕсем хутшăннă май Чăваш Енĕн агропромышленноç комплексне малалла аталантармалли проектсене – пĕтĕмпе 4 миллиард тенке яхăн – пăхса тухнă. "Юрий Владимирович малтанах ҫак проектсене тивĕҫлипе хакларĕ", – палăртнă Николай Федоров. "Россельхозбанк" ертӳҫисем черетлĕ 1 миллион тенке – Пăрачкаври ача ҫуртне пулăшма, 500 пин тенке – Пăрачкав районĕнчи Ҫветтуй Троица чиркĕвне юсама, 500 пин тенке – Кӳкеҫре чиркӳ тума, 200 пин тенке ялти спорта аталантарма уйăрни ҫинчен пĕлтернĕ. Кунсăр пуҫне, "Россельхозбанк" ертӳҫисем хăйсен пĕлĕвне ялапама хатĕр 15 студент валли кашни уйăхра 3 пин тенкĕлĕх стипенди йĕркелеме йышăннă. "Кусем тĕлĕнмелле условисем, вĕсем ҫинчен эпĕ ĕмĕтленме пултарайман. Ан ӳркен кăна, ҫак пурнăҫра мĕн те пулин пурнăҫлама кăмăл ту ҫеҫ", – тенĕ Николай Федоров.

Ҫав вăхăтрах Николай Федоров Чăваш Енри проект тăвакансен, энергетиксен тата газ кĕртекенсен ĕҫхĕлне ҫивĕч критикленĕ.

"Россельхозбанк" АУО-н Чăваш регион филиалĕн хушма офисĕсене тăвас ĕҫре тухса тăракан йывăрлăхсем ҫинчен филиал директорĕ Ирина Письменская каласа кăтартнă.

Чĕннĕ монополистсем ăнлантарса панисем канашлăва хутшăннисене ĕнентереймен. Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн ертӳҫи Энвер Аблякимов монополистсем объектсен хуҫисенчен укҫа ытларах сăптăрса илме тĕллев лартнă тесе палăртнă.

Планеркăра ҫавăн пекех Чăваш Республикин социаллă пурнăҫпа экономика аталанăвĕн ытти ҫивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

**ЧР ПА пресс-служби.**

## Хаҫат ҫырăнакансене пĕлме

# Квитанцисене ярса пама кирлĕ мар

**Райхаҫат редакцийĕ "Ҫĕнтерӳ ялавне" 6 уйăха ҫырăнакансем хушшинче лотерея вылявне ирттернине нумайăшĕ пĕлеҫҫĕ.**

**Лотерея вылявне райхаҫата 6 уйăха ҫырăнакансем пурте хутшăнаҫҫĕ. Хаклă вулакансем, квитанцисене редакцие ярса пама кирлĕ мар. Кашни ҫыхăну уйрăмĕнчех эсир хаҫат ҫырăннине ҫирĕплетекен хут – доставочная карточка – пур. Лотерея вылявне вĕсемпе усă курса ирттерĕпĕр.**

**Выляв ирттерме ответлă та сумлă ҫынсенчен комисси йĕркелĕпĕр. Унта ҫыхăну уйрăмĕн ĕҫченĕсене те явăҫтарăпăр. Выляв тиражне райхаҫатра пичетлĕпĕр.**

**РАЙХАҪАТ РЕДАКЦИЙĔ.**

## Ĕҫре пултаруллисем



***Сăн ӳкерчĕкре эсир «Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека» муниципаллă культура учрежденийĕн библиотекарьне Раиса Николаевна Куликована куратăр. Хăйĕн ĕҫне ответлăха туйса, пахалăхлă пурнăҫлама хăнăхнă вăл. 1991 ҫултанпа библиотекăра вăй хурса ĕҫре пуян опыт пухнă. Кĕнекесемпе туслисен йышĕ ӳссе пытăр тесе вăл пĕтĕмпех тума тăрăшать.***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Райадминистрацире

# Хастаррисене – Хисеп грамотисем

Районти ĕҫпе тивĕҫтерекен центр тата районти тĕп больница ыйтнисене тивĕҫтерсе, район администрацийĕн пуҫлăхĕн майăн 15-мĕшĕнчи 236 № йышăнăвĕпе ҫаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Халăх сывлăхне сыхлас ĕҫре нумай ҫул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Светлана Георгиевна АЛЕКСЕЕВАНА**, районти тĕп больницăн операци уйрăмĕн медицина сестрине;

– **Раиса Ивановна ТОЛСТОВАНА**, районти тĕп больницăн терапи уйрăмĕн медицина сестрине.

2. Ҫынсене ĕҫпе тивĕҫтерессин службин органĕсенче нумай ҫул хушши тăрăшса ĕҫленĕшĕн – **Нина Геннадьевна САФИУЛИНАНА**, районти ĕҫпе тивĕҫтерекен центрăн ертсе пыракан специалистне.

## Камăн сăвăм пысăкрах?

### РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУҪАЛĂХСЕНЧЕ ҪĔРТМЕ УЙĂХĔН 5-МĔШĔНЧЕ КАШНИ ĔНЕРЕН СĔТ МĔН ЧУХЛĔ СУСА ИЛНИНЕ КĂТАРТНИ

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Кашни ĕне пуҫне ĕнер сĕт сунă. 2. Иртнĕ ҫулхипе танлаштарсан (килогрампа, "–" – сахалрах).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 7,1 | -3,9 |
| "Волга" | 11,3 | 0,1 |
| "Восток" | 16,9 | 3,8 |
| "Герой" | 19,3 | 3,0 |
| К. Иванов яч. хис. | 11,5 | 3,2 |
| Ильич яч. хис. | 15,3 | 0,2 |
| Ленин яч. хис. | 11,3 | -4,1 |
| "Лидер" АФ | 9,5 | -4,1 |
| "Оринино" | 14,7 | 2,5 |
| "Передовик" | 6,8 | -5,6 |
| "Свобода" | 14,9 | 0,3 |
| "Сеятель" | 7,0 | 1,5 |
| Суворов яч. хис. | 18,0 | 6,7 |
| "Рассвет" АФ | 9,3 | -4,0 |
| "Ударник" | 14,9 | 0,5 |
| Чапаев яч. хис. | 10,0 | -0,6 |
| "Чемеево" | 6,5 | -4,4 |
| Чкалов яч. хис. | 13,9 | 3,3 |
| **Районĕпе** | **12,9** | **0,0** |

## Ҫуралнă кун ячĕпе

### *Саламлатпăр*



14 ҫул хушши "Муркашри издательство ҫурчĕн" директорĕ-тĕп редакторĕ пулса ĕҫлекен **Аатолий Иванович ТИХОНОВĂН** ҫак илемлĕ ҫуллахи вăхăтра ҫуралнă кунĕ. Ҫирĕп ыйтакан пултаруллă ертӳҫĕне, йывăрлăхра яланах алă тăсса паракан юлташа эпир ҫак паллă кунпа ăшшăн саламласа малалла та район хаҫачĕ республикăри хаҫатсем хушшинче малтисен йышĕнче пуласса шансах тăратпăр. Таса сывлăхпа пурнăҫăн анлă ҫулĕпе паянхи пекех ҫирĕппĕн утма пĕтĕм кăмăлпа ыррине кăна сунатпăр.

**РЕДАКЦИ КОЛЛЕКТИВĔ.**